Тӳлев ыйтăвĕсемпе

# Хваттерте пурăнатăн пулсан

Çынна пурăнма кирлĕ условисенчен пĕри çурт-йĕр пурри пулса тăрать. Çĕршер çын паян пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Хваттерсенче пурăнакансенчен ытларахăшĕ вара хваттерсенче пурăннăшăн тата коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн йĕркеллĕ тата вăхăтра тӳлесе тăрать. Анчах та çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнманнисем те çук мар. Хăшĕсем хваттерсенче пурăннăшăн тата коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн тӳлессинчен пăрăнаççĕ, тӳлев вăхăтне тăсса пыраççĕ. Кун пек чухне вара пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă предприятийĕ парăма ирĕксĕрлесе шыраса илесси пирки суда документсем тăратма пултарать.

Суд тивĕçлĕ йышăну тунă хыççăн суд приставĕсен районти пайĕ ĕçе тытăнать. Суд приставĕсем исполнительнăй производство уçаççĕ тата ун пирки хваттерте пурăнакан патне пĕлтерӳ ярса параççĕ. Çакăн хыççăн та хваттерте пурăнакан хваттерте пурăннăшăн тата коммуналлă çăмăллăхсемпе усă курнăшăн парăмсене тӳлесе татмасть пулсан, пурлăх çине арест хураççĕ. Çак пурлăха сутса тунă укçа-тенкĕ парăма саплаштарма каять.

Кăçалхи ултă уйăхра кăна пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ тĕлĕшпе кун пек исполнительнăй производствăсем 185 пулнă. Вĕсенчен 184-шĕ коммуналлă пулăшусемшĕн укçа шыраса илесси пирки. Пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен парăма шыраса илнĕ. Çак тапхăртах парăма тӳлесе татма килĕшменнисем пирки пурлăх çине арест хунă тĕслĕхсем 40 ытла пулнă.

Паянхи лару-тăру та шухăшлаттарма тивĕç. Хваттерсенче пурăнакан 5 çыннăн парăмĕсем уйрăмах пысăк. Вĕсем коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн çуршар çул тата ытларах та тӳлемен. Вăхăт çитсен вара пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ ку хваттерсенче пурăнакансене хваттерсенчен кăларса ярасси пирки те ыйту лартма пултарать. Кун пек тĕслĕх районта çук мар ĕнтĕ. Хваттерте пурăннăшăн тата коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн тӳлеменшĕн пĕр çемьене суд приставĕсем ирĕксĕрлесе пĕр пӳлĕмлĕ хваттертен кăларса янă.

Çавăнпа та суд приставĕсем киле пырасса кĕтсе ларас марччĕ. Хваттерсенче пурăннăшăн тата коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн вăхăтра тата йĕркеллĕ тӳлесе тăрасчĕ.

**М. КОСТИН,**
**районти суд приставĕ.**

Конкурс

# «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ»

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерстви йĕлана кĕнĕ «Хĕрарăм – çулталăк директорĕ» конкурс ирттерет.

Çак конкурса ирттерессине федераллă шайрах палăртнă. Унăн тĕллевĕ хăйсен предприятийĕсене аталану çулĕпе çирĕппĕн илсе пыма пултаракан, социаллă ыйтусене татса парссипе çитĕнӳсем тăвакан, ыр кăмăллăх акцийĕсене хутшăнакан, конкретлă обществăлла ĕçпе çыхăннă хĕрарăм-ертӳçĕсене хавхалантарасси, кунпа пĕрлех тухăçлă ĕç опытне сарасси, Раççейри чи пултаруллă хĕрарăм-ертӳçĕсен даннăйĕсен банкне туса хурасси пулса тăрать.

Конкурс икĕ тапхăрпа иртет. Пĕрремĕш тапхăрта пултаруллисене федераци субъекчĕн шайĕнче суйласа илеççĕ. Иккĕмĕш тапхăрта вара çĕнтерӳçĕсене Раççей регионĕсем тăратнă кандидатсенчен палăртаççĕ.

Конкурса пуçаруллă, хастар, активлă хĕрарăмсем хутшăнма пултараççĕ. Унăн участникĕсем экономикăн пур отраслĕсен представителĕсем те пулма пултараççĕ. Вăл шутра промышленноç, строительство, транспорт, ял хуçалăх, наука, вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç, культура, суту-илӳ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисен, вырăнти самоуправлени органĕсемпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем, депутатсем.

Конкурса хутшăнаканăн ертӳçĕре 3 çултан кая мар ĕçлемелле. Вăл ертсе пыракан предприятин производство ĕçĕ-хĕлĕ лайăх шайра пулмалла, вăл тĕрлĕрен социаллă тата ыр кăмăллăх программисене хутшăнмалла.

Конкурса хутшăнма кирлĕ документсем нумаях мар: конкурса хутшăнаканăн анкети, ун пирки кĕскен каласа пани т. ыт. те. Тĕплĕнрех кун пирки Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствин сайтĕнче пĕлме пулать.

Конкурса хутшăнас ыйтусемпе Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствине 62-10-07 тата район администрацийĕн экономика пайне 2-13-41, 2-13-39, 2-22-45 телефонсемпе шăнкăравламалла.

Йывăç лартас уйăхлăх

# Симĕслентĕр Муркаш тăрăхĕ

***Йывăç лартас уйăхлăхăн хĕрӳ тапхăрĕ пырать. Кам хамăр тавралăх илемĕшĕн шутлать, çав йывăç лартма та манмасть. Паянхи кун тĕлне миçе тĕп йывăç хунавĕ лартма ĕлкĕрнĕ, ку ĕçе камсене ытларах явăçтарнă? Çакăн пирки тĕплĕнрех паллаштарма ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен тĕп специалистĕнчен Г.Г. СИМАКОВРАН.***

**– Георгий Георгиевич, районта йывăç лартас уйăхлăх мĕнле пырать?**

– Районта эпир йывăç лартассипе япăх мар ĕçлесе пыратпăр. Çуркуннехи уйăхлăхра 42300 йывăç лартса хăвартăмăр. Вĕсене çум курăкран тасатса, тирпейлесе тăракансем пур. Енчен те çак ĕçе вăхăтра пурнăçламасан, хунав вăйсăрланса юлать. Пирĕн ĕç вара харама кайма пултарать.

Кĕрхи уйăхлăх сентябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 20-мĕшĕччен пырать. Каласа хăвармалла, çак уйăхлăх, ытти çулхисемпе танлаштарсан, кăшт каярах юлса пуçланчĕ. Çакă вăл нӳрĕк ытларах пулнипе, йывăç çулçисем те час саралманнипе çыхăннă. Йĕрке тăрăх вара çулçăсем ӳксен çеç хунава лартма вăхăтлă. Апла пулин те паянхи кун тĕлне тăвата-пилĕк пин тĕп лартма ĕлкĕртĕмĕр. Ку ĕç япăх мар. Уйăхлăх вĕçлениччен пирĕн тата 10 пин хунав лартса хăвармалла. Çакă вăл, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 2 хут нумайрах. Апла пулсан эпир хамăр тавралăхшăн, çут çанталăк илемĕшĕн тăрăшатпăр.

**– Йывăç лартас ĕçе ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем пурнăçлаççĕ-и?**

– Ку ĕçе эпир ытларах шкулта вĕренекенсене явăçтаратпăр, иртнĕ çулсенче те çаплах пулнă. Аслă ăрурисем те ала усса лармаççĕ, çак ĕçе хутшăнаççĕ.



Тĕслĕхрен, Мăн Хураçкари Игорь Прокопьев ял старости пуçарнипе çăка, хурăн, чăрăш, хыр хунавĕсем лартрĕç. Çак ĕçре кашнин пуçарулăх кăтартма тăрăшмалла. Енчен те кашни çын виçĕ хунав лартса хăварать пулсан, самай лайăх пулнă пулĕччĕ.

Йывăç лартас ĕç те укçа-тенкĕ тăкакĕпе çыхăннă. Ку тĕлĕшпе Муркаш район администрацийĕ пысăк тимлĕх уйăрать.

**– Ытти çĕрте тата мĕн пурнăçлама палăртнă?**

– Эпир чылай ĕç пурнăçлама палăртрăмăр. Çак кунсенчех Муркашри кирпĕч заводĕ еннелле виçĕ рет хурăн, чăрăш лартса хăвармалла. Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Анатолий Андреевич Иванов Якаткасси ялĕ валли 2500 хурăн, 1500 чăрăш хунавĕсем илсе кайрĕ, ăна çулăн икĕ енĕпе лартма палăртрĕç. Çавăн пекех 2000 хурăн хунавне çырма-çатраллă вырăна лартма шутланă.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, хăш-пĕр вырăнсенче çĕр питĕ хăвăрт ишĕлет. Çавăнпа та ишĕлессине чарас тĕлĕшпе Йӳçкасси, Кашмаш, Вомпăкасси, Анаткасси ялĕсенче йывăçсем лартма палăртрăмăр.

Хăш-пĕр вырăнсенче йывăç хунавĕсем хăрса кайнă, хуçăлнă е тата касса кайнă тĕслĕхсем чылай. Вĕсене çĕнĕрен хунавсем лартса юсассипе “Сельлесхоз-ра” вăй хуракансем ĕçлеме палăртрĕç. Ку ĕçе вĕсем пуçăннă та ĕнтĕ.

**– Районти выльăх масарĕсенче çĕпĕр язви пурри паллă. Ку енĕпе мĕнле ĕçсем пурнăçланă?**

Пирĕн районта выльăх масарĕсене пăхса тирпейлесе тăрас ыйту çивĕч тăрать. Эпир ку тĕлĕшпе тăтăшах ял тăрăхĕсене тухса çӳретпĕр, унти пуçлăхсемпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнатпăр. Хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем выльăх масарĕсем ăçта вырнаçнине те пĕлмеççĕ. Ку вара питĕ хумхантаракан ыйту. Паянхи куна районта 87 выльăх масарĕ шутланать. Вĕсенчен 28-шĕнче çĕпĕр язви чирĕпе вилнĕ выльăхсене пытарнине палăртнă. Çакă вăл хăрушă япала, çавăнпа та масарсене картасем тытса йĕркене кĕртме çирĕппĕнех ыйтас килет. Эпир асăрхаттарнă пулин те, паянхи куна та тивĕçлĕ мерăсем йышăнман ял тăрăхĕсем пур.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи выльăх масарĕ шыв хĕрринче вырнаçнă. Çавăнпа та кунта йывăçсем çине тăрсах лартмалла.

Юлашкинчен эпĕ пурне те йывăç лартас уйăхлăха активлă хутшăнма чĕнсе каласшăн. Йывăç лартса чĕртесси кашнин тивĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа та çак тивĕçе пурнăçлани хамăршăн та, пирĕн ачасемшĕн те питĕ кирлĕ.

Йывăç лартма хутшăнатпăр пулсан, эпир ял хуçалăх ĕçченĕсем шутланатпăр. Çавăнпа та сире пурне те, çут çанталăк тусĕсене, çĕр çинче вăй хуракансене сывхарса килекен ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕ ячĕпе саламлатăп. Пурне те ырлăх-сывлăх, чăтăмлăх, ăнăçу, çирĕп сывлăх сунатăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: йывăçсене лартсан упрама та манмалла мар.**

Выльăх-чĕрлĕх чирлесен

**ВЫЛЬĂХ КӲПĔНСЕН.** Выльăха тăварланă хăяр шывĕ е тип çу ĕçтермелле.

**ВАР-ХЫРĂМ ĔÇЛЕМЕННИНЧЕН.** Чирлĕ выльăха мулкач курăкĕн (тысячелистник), сар çип ути (зверобой), юман хуппи шывĕ ĕçтермелле. Çак курăксен (уйрăмах мулкач курăкĕн) шывĕ выльăхăн юнлă вар витти пулнă чух питĕ лайăх пулăшать.

**ХЫРĂМЛĂХ ХЫТСАН.** Йĕтĕн вăрри шывĕ питĕ усăллă.

**ÇИЛĔ ШЫÇНИНЧЕН, ЫРАТНИНЧЕН.** 200 грамм сиплĕ улăх кĕпçин (окопник) тымарне вĕтетмелле, кофемолкăпа авăртмалла (вĕттĕн турасан та юрать). Унта 1 литр тăварсăр вĕри сысна çăвĕ хушса пăтратмалла. Сивĕ çĕрте упрамалла. Çак хутăшпа çилле сĕрмелле.

**КУÇА ШУР ИЛНИ.** Çурмашар виçепе тăвар, сахăр песукĕ илмелле, çăнăх пек пуличчен тӳсе вĕтетмелле. Хут çине хурса выльăх куçне вĕрсе кĕртмелле.


Пĕлтерӳсем. Объявления

**Отдел социальной защиты населения Моргаушского района Министерства здравоохранения и социального развития Чувашской Республики информирует, что согласно п.1 ст.17 Федерального закона от 25 апреля 2002 г. № 40-ФЗ “Об обязательном страховании гражданской ответственности владельцев транспортных средств” инвалидам, получившим транспортные средства через органы социальной защиты населения, предоставляется компенсация в размере 50 процентов от уплаченной ими страховой премии по договору обязательного страхования. Данная компенсация выплачивается при условии использования транспортного средства лицом, имеющим на нее право, и еще не более чем одним водителем.**

**Владельцам транспортных средств, получившим транспортные средства через органы социальной защиты населения, необходимо обратиться в отдел соцзащиты (каб.109) до 1 ноября 2006 года со следующими документами:**

**- копия страхового полиса обязательного страхования гражданской ответственности владельца транспортного средства;**

**- копия квитанции об уплате страховой премии по договору;**

**- копия паспорта транспортного средства, выписанного на имя инвалида.**

**Выплата компенсации осуществляется по договорам обязательного страхования гражданской ответственности за периоды, действующие с 2004 года.**

**Телефон для справок 2-12-94.**

**Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-927-849-15-17, 8-927-841-39-12.**

**Кадикасинское сельское поселение Моргаушского района сообщает, что 7 ноября 2006 года в 11-00 в Калайкасинском сельском клубе (д. Калайкасы Моргаушского района ЧР) состоится публичное слушание по вопросу: «О выделении земельного участка под строительство придорожного сервисного центра ООО «Уют».**

**Срочно продаю ВАЗ 2106-1 1996 года выпуска, белый, ТО до июня 2007 г., страховка, за 35 тыс. руб., торг. Продаю руль на классику, новый, 500 рублей.**
**Телефон: 8-927-665-02-43.**

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, шифер 7-8-миволновый, плоский, цемент, рубероид, ячмень 80 тонн. Требуется водитель на ГАЗ-53, МАЗ, КамАЗ.**
**Телефон: 8-903-379-16-62, 8-960-308-28-01, 2-18-80.**
**1-2.**

**Ноябрь уйăхĕнче пĕрремĕш хут пăруламалли ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-854-18-54.**

**13 октября в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**Ĕлĕкхи укçа, кĕнекесем, открыткăсем, статуэткăсем тата кивĕ япаласем туянатăп.**
**Телефонĕ: 8-927-850-67-05. 5-5.**

**Паянхи номерăн 7–10 страницисенче пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем заказ шучĕпе пичетленеççĕ.**
**Ял тăрăхĕсенче паллашмалла.**

КПКГ “АГРОКРЕДИТ”
Приглашаем пайщиков:
**Хранение сбережений**
3 мес. - 14% 12 мес. - 20%
6 мес. - 17% 24 мес. - 25%
12 мес. (”Пенсионный”) - 21%
Потребительские займы
до 20 000 руб., 5 % в месяц
Свид. о гос. рег. 6612441197 от 28.08.2001 г.
с. Моргауши, ул. 50 Октября, д. 23
(Здание сельхозтехники) Тел. 2-18-13


«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Юлия Валериановна**
**ЮРКИНА**
пенсионерка вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3350.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 06.10.2006 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.